**3-11 классенче вĕренекенсен чăваш чĕлхипе усă курас ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсем (Пĕтĕм Раççейри шкул ачисен Аслă Олимпиади «Радиус» пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх)**

Ку Олимпиада Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн пуçарăвĕпе 2007 çултанпа çулсерен иртет. Кăçал «Чăваш чĕлхи» секцийĕ февралĕн 1 – 7-мĕшĕсенче дистанци мелĕпе иртрĕ. Тест ыйтăвĕсемпе творчество заданийĕсене шкул ачисем чăваш чĕлхипе усă курма хăш шайра пултарнине çак параметрсем тăрăх палăртас тĕллевпе йĕркеленĕ: тĕнчекурăм анлăшĕ, чăваш чĕлхипе çырулăх ыйтăвĕсене ăнланни, шкул ачисем чăваш чĕлхипе çыхăннă историпе культура сведенийĕсене чухлани. Икĕ тата нумай чĕлхелĕх условийĕсенче чĕлхепе калаçаканшăн çакнашкал ыйтусем те пысăк пĕлтерĕшлĕ: сăмах енчĕкĕн пуянлăхĕ, стилистика тата лексикăпа грамматика уçлăхĕнче харкама шанчăклă туйни, грамматика нормисене пĕлни тата орфографипе пунктуаци правилисемпе пуплевре тĕрĕс усă курас ăслайсемпе хăнăхусем.

Мониторинг çăлкуçĕ вырăнне тупмалли юмахсемпе, ваттисен сăмахĕсемпе, каларăшсемпе, çунатлă сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе, предложенисемпе тата ытти программа материалĕпе усă курнă.

3 тупмалли юмах («Ирпе тăватă уран, кăнтăрла икĕ уран, каçпа виçĕ уран». – 3-мĕш класс; «Урлă ура утаман». – 6-мĕш класс; «Икĕ вĕçлĕ, икĕ ункă, варринче – пăта». – 7-мĕш класс. Тупсăмĕсем: этем; упа; хачă) ачасемшĕн ансат пулчĕ, пурте тĕрĕс хуравланă. «Хĕрлĕ хĕр пĕлĕт тăрăх çӳрет» тупмалли юмах тупсăмне чухласа илменнисем 3-ĕн пулчĕç (вĕсем «хĕвел» вырăнне «уйăх» çырнă).

Ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшсемпе ĕçлемелли инструкци вырăнне сиктерсе хăварнă сăмаха кĕртсе лартма хушнăччĕ. Çак тĕслĕхсене пурте пурнăçланă: «Улми (йывăççинчен) аякка ӳкмест». – 2-мĕш класс; «Паян тумалли ĕçе (ырана) ан хăвар». – 4-мĕш класс; «Маччана сурса (вырт)». – 5-мĕш класс; «Уй пек асли, (вăрман) пек пуянни çук». 7-мĕш класс; «(Çынни) мĕнле, ĕçĕ çапла». – 10-мĕш класс).

Предложенисенчи сиктерсе хăварнă вырăна хальхи вăхăтри глаголсен пурлă тата çуклă формăсенчи аффиксĕсене кĕртсе лартма тата ку предложенисене чăвашларан вырăсла куçарма хушнине 8-мĕш классем пурте пурнăçланă.

6-мĕш класра «Усал (хыпар) утпа çӳрет» каларăшра сиктерсе хăварнă сăмах вырăнне 2 ача «хĕр арăм» лартнă.

8-мĕш класра 3 каларăш предложенире сиктерсе хăварни вырăнне пĕртен-пĕр сăмах – «йытă» - лартмалла пулнă. 2 ача ку задание сиктерсе хăварнă.

«Çын (япалине) ан хапсăн» - 1 заданири тĕрĕс предложени (9-мĕш класс).

10 – 11-мĕш классенче 1 заданири тĕрĕс хурав: «*Ăсти* мĕнле, ĕçĕ çапла». Темиçен çапла хуравланă: «*Хуçи* мĕнле, ĕçĕ çапла», «*Çынни* мĕнле, ĕçĕ çапла».

Фразеологизмсемпе çыхăннă çак заданисенче пĕлтерĕшсене ăнланнипе çыхăннă йăнăшсем çук: «Хăйне мăнна хурать» тесе кам çинчен калаççĕ?» - 4-мĕш класс; «Тӳр пилĕк» тесе мĕнле çынна калаççĕ?» - 7-мĕш класс; «Ылтăн алăллă» тесе мĕнле çынна калаççĕ?» - 9-мĕш класс; «Хурапа шурра курнă çын» мĕнлескер вăл?» - 10 – 11-мĕш классем.

Фразеологизм пĕлтерĕшне уçса парассипе 5-мĕш («Кам пирки «тăм пăшал» теççĕ?») тата 6-мĕш («Пĕр чĕлхе тупрĕç» тесе камсем çинчен калаççĕ?») классенче йăнăшнă. 5-мĕш класра 2 ача «Пеме пĕлменскер пирки» хурав панă, темиçе ача ку задание сиктернĕ. 6-мĕш класри заданире темиçе ача çакăн пек йăнăш хурав панă: «Чăвашла та, вырăсла та калаçма пĕлекенсем çинчен».

*Чăваш чĕлхин графика никĕсĕсене пĕлни çинчен.* 3-мĕш класра сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарас задание пурте пурнăçланă. Шел пулин те, кунашкал задани 5-мĕш класра вĕренекенсенчен нумайăшĕшĕн шăл çемми пулман. Ку заданире пĕр сасăпа (л сасă) пуçланакан сăмахсем сĕннĕччĕ. Вĕсене алфавит йĕркипе вырнаçтарас тесен, 7 сăмаха асра тытмалла та çак сăмахсенчи сасăсемпе сас паллисене хушас-кăларас операцие пурнăçламалла. Ачасем алфавит йĕркине ăса çирĕп вырнаçтарман курăнать. Çавăн пекех хăш-пĕр ачасен самантлăх ас шайĕ палăрмаллах пĕчĕк пулмалла.

4-мĕш классемшĕн 5 задани (хытă, çемçе тата хутăш сăмахсенчен юлашкисене суйласа илесси) йывăртарах пулчĕ. Виççĕшĕ «тăван» (ку хытă сăмах, мĕншĕн тесен пур уçă сасă та хытă е кайри ретри сасă) сăмаха суйласа илнĕ, иккĕшĕ «асанне» сăмаха тĕрĕсех суйласа илнĕ те ун çумне тата тĕрĕс маррине («тăван») хушса хунă).

9-мĕш классенчен виççĕшĕ сингармонизм саккунне пăхăнман сăмаха («асанне») палăртман.

*Граммматика тата орфографи.* Предложенири пăтраштарнă сăмахсене йĕркелесе лартмалли задание 3-мĕш (1 задани) тата 4-мĕш (6 задани) классем пурте пурнăçланă. 3-мĕш классем пурте çемçетӳ палли ытлашши сăмаха (4 задани) тата хупă сасă вăрăмланнине йăнăш палăртнă сăмаха (7 задани) тупассине çăмăллăнах пурнăçланă. 5-мĕш классемшĕн вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене камăнлăх падежĕнче тĕрĕс вĕçленĕ варианта палăртасси йывăр пулман (4 задани). Вĕсем çăмăллăнах хушу наклоненийĕнчи глагола 3 сăпати нумайлă хисеп форминче мĕнле çырмаллине палăртнă: -чч сасă хыççăнхи хупă сасса çемçетет, çырура вара аффикс хытă е çемçе вариантлă пуласси тымар хытă-çемçе пулнипе çыхăннă; хытă сăмахсенче *çы, чы* (çи, чи илтĕнсен те) çыраççĕ (3 задани).

7-мӗш класра вӗренекенсем пурте 9 задание тӗрӗс пурнӑҫланӑ (япаласем нумай пулнине палӑртнӑ чухне сӑмах майлашӑвӗн тӗп пайӗнчи япала ятне пӗрреллӗ хисепре лартмалла). 8-мӗш классемшӗн 4 задани йывӑрах пулман: сӑвӑра сиктерсе хӑварнисем вырӑнне хальхи вӑхӑтри глагол аффиксӗсене кӗртсе лартасси (-аҫҫӗ (-еҫҫӗ). 10-мӗш класра вӗренекенсемшӗн япала ячӗсене камӑнлӑх форминче вӗҫлесси йывӑрах мар (9 задани).

4-мӗш класра вӗренекенсем 4 задание пурнӑҫлама йывӑрланарах тӑнӑ: «Хӑш сӑмахра ҫемҫетӳ палли кирлӗ?» (Чӑваш сӑмахӗсенчи *лч* тата *нч* сасӑ майлашӑвӗсенче тата ҫемҫе уҫӑ сасӑсемпе юнашар ҫемҫетӳ палли лартмаҫҫӗ. Ку правилӑна вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмахсем пӑхӑнмаҫҫӗ: «шинельлӗ». Хӑш-пӗрисем йӑнӑшпа «пӑнчӑ» сӑмаха суйласа илнӗ.

5-мӗш класра вӗренекенсенчен пӗр пайӗ 9 задание пурнӑҫламан: «Хӑш сӑмахсене тӗрӗс мар ҫырнӑ?» (Виҫҫӗмӗш ушкӑнри сӑмахсене тӗрӗс мар ҫырнӑ: *хӗвель* (сӑмахсенче ҫемҫе уҫӑ сасӑсемпе юнашар ҫемҫетӳ палли лартмаҫҫӗ); *кальча* (лч сасӑ майлашӑвӗнче ҫемҫетӳ палли ытлашши); *вутчул* (ку хутлӑ сӑмахра 3 сӑпатӑн камӑнлӑх аффиксӗ кӗскелсе ҫемҫетӳ паллине куҫнӑ: *вут чулӗ – вутчуль*). Пиллӗкӗшӗ ку задание сиктернӗ, тӑваттӑшӗ тӗрӗс хурав ҫумне тата пӗремӗш ушкӑнри сӑмахсене хушса хунӑ: *шалча, калча, панча.* Виҫҫӗшӗ кашни ушкӑнранах пӗрер е икшер сӑмах суйласа илнӗ. Хӑшӗсем пӗрремӗш ушкӑнри сӑмахсене суйланӑ.

6-мӗш класра вӗренекенсенчен хӑшӗ-пӗрисем вӑйлӑ степеньри паллӑ ятне палӑртма (4 задани) йывӑрланса тӑнӑ. (Тӗслӗхсенче *сап-сарӑ* сӑмаха панӑ. Ку сӑмах дефиспа ҫырӑнать. Ҫак ретрех дефиспа ҫырӑнакан тепӗр сӑмах – мӑшӑр япала ячӗ – пур: *им-ҫам*. Япала ячӗпе паллӑ ятне дефиспа ҫырни ку сӑмахсен пуплев пайне тӗрӗс палӑртма иккӗлентернӗ курӑнать). Иккӗн *им-ҫам* сӑмаха суйланӑ. Пӗр вӗренекен вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ япала ятне камӑнлӑх падежӗнче вӗҫленин тӗрӗс мар вариантне суйласа илнӗ (8 задани).

8-мӗш класра вӗренекенсенчен темиҫен 2 задание («Хӑш ушкӑнра йӑнӑш ҫырнӑ сӑмах пур?») тӗрӗс мар пурнӑҫланӑ. Тӗрӗс хурав (А вариант) вырӑнне вӗсем е Ӑ, е Б вариантсем суйланӑ. (Йӑнӑш ҫырнӑ сӑмах А вариантра – хутлӑ сӑмахсене пӗрле ҫыраҫҫӗ: литпӗрлешӳ). 8-мӗш класс валли 9 задани: «Паллӑ тунӑ сӑмахсем мӗнле пуплев пайӗ пулаҫҫӗ?» Паллӑ тунӑ сӑмахсем – пулмалли причастисем – сӑвӑ ҫаврӑмӗсенче. Хӑшӗ-пӗрисемшӗн ку сӑмахсем – деепричастисем, хӑшӗ-пӗрисемшӗн – инфинитивсем, виҫҫӗн пулас причасти тесе шутлаҫҫӗ. Ҫакнашкал заданиех (5 задани) 9 класс валли те панӑ: «Палӑртнӑ сӑмах хӑш пуплев пайӗ пулать?» Тӗрӗс хурав: татӑк. Вӗренекенсен пӗр пайӗ А хурав (союз), тепӗр пайӗ Б хурав (наречи) суйласа илнӗ.

9-мӗш класра вӗренекенсенчен тӑваттӑшӗ 6 ыйтӑва («Предложенири запятоя мӗнле пунктуаци правилине пӑхӑнса лартнӑ?») тӗрӗс мар хуравланӑ. Правили ансат: Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене запятойпа уйӑрса ҫыраҫҫӗ (Тӗрӗс хурав: В).

Камăнлăх формипе тĕрĕс усă курнă варианта палăртасси (5 задани) 10 – 11-мĕш классенче вĕренекенсенчен улттăшĕшĕн ытла кăткăс пулнă, вĕсем ăна тĕрĕс мар хуравланă. (Тĕрĕс хурав: Б («Манăн аннемпе калаçать»).

*Лексикăпа стилистика.* 3-мĕш класс валли 6 («Ытлашши сăмахĕ хăшĕ?») тата 8 («Путмар» мĕн япала?»), 4-мĕш класс валли 1(«Хăш сăмахĕ ытлашши?») тата 2 («Хăш сăмахĕ глагол мар?»), 5-мĕш класс валли 8 («Хĕр ачасемпе арçын ачасен ячĕсене ушкăнласа çыр») заданисем палăрмаллах ансат пулчĕç.

7-мĕш класран пĕр вĕренекен тăршшĕне пĕлтерекен («хăлаç») сăмаха пĕлмест, тепĕр вĕренекен «кĕрепенкке»(фунт) сăмаха тăршшĕне палăртаканнисен йышне кĕртет. «Омоним» сăмах пĕлтерĕшне пĕри пĕлмест.

9-мĕш класра вĕренекенсенчен улттăшĕ диалект сăмахĕсене литература чĕлхинчисемпе пăтраштарать (9 задани).

10 – 11 классем валли 8 задани: «Çак сыпăк умне тивĕçлисене кĕртсе лартса 5 çĕнĕ сăмах ту; -ĕм». 9 вĕренекен ку сыпăкпа сăмах тăвакан аффикс вырăнне мар, сăмаха тата формăна улăштараканнисем вырăнне усă курнă: вĕренекенĕм, чĕлĕм, чĕппĕм т. ыт.те.

Куçармалли заданисем. Куçару – чĕлхепе усă курассин репродукципе продукци шайне палăртмалли питех те паха мел. Куçару вăл пысăк творчество ĕçĕ. 5-мĕш класра вĕренекенсем йывăрах мар «Пĕчĕк хуçа» текста япăх мар куçарнă. Вĕсем текст содержанине аван ăнланнипе пĕрлех çыру хăнăхăвĕсем япăхрах пулнине кăтартрĕç. Тирпейлĕ, хитре почеркпа çырнă, пĕр йăнăшсăр ĕçсем сахал. Офографи, пунктуаци, грамматика йăнăшĕсем кашни ĕçре тенĕ пекех тĕл пулаççĕ.

8-мĕш класра вĕренекенсем, пуплевре сахал усă курнăран пулас, сĕннĕ ретре вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмаха тупма (3 задани) йывăрланнă. Хăшĕ-пĕрисем ку сăмаха «сысна» тесе палăртаççĕ. Тăххăрмĕшсем чăваш пуплевне вырăсла шухăшласа çыраççĕ. Акă «играю на гармошке» çаврăнăша олимпиадăна хутшăнакансен пĕр пайĕ «купăс çинче вылятăп» тесе куçарать. Йăнăш куçарусем хушшинче çаксем те пур: купăспа калатăп, купăспа вылятăп.

10 – 11 классеняе вĕренекенсенчен чылайăшĕ Иван Яковлевич Яковлев «Чăваш халăхне панă Халала» ним улăштармасăр çырса илнĕ. Хăшĕ-пĕрисем орфографине те иртнĕ ĕмĕрти 20-мĕш çултисенчинех хăварнă. Пысăк йăнăшсем шутне сăмах пĕлтерĕшĕсене тĕрĕс мар куçарнине, сăмахсене сиктерсе хăварнине, чăваш предложенийĕнчи сăмахсен йĕркине шута илменнине кĕртмелле. Акă оригиналти предложени: «Чтите и любите великий, добрый и умный русский народ». Ача куçарăвĕ: «Упрăр тата юратăр ырă та ăслă вырăс халăхне». Оригинал: «Трудна была жизнь этого народа, много горестей и несчастий встретил он на своем долгом и скорбном пути, но не утратил понимания своего высокого призвания». Куçару: «Йывăр пулнă

пурнăç ку халăхăн, нумай хуйхă курнă вăл хăйĕн вăрăм кун-çулĕнче». Малалла: «Любите его и сближайтесь с ним» («Юратăр ăна, унпа пĕрле пулма тăрăшăр». Автор предложенири сăмахсен йĕркине вырăс чĕлхинчинех хăварса, кашни сăмаха йĕркешерен куçарма тăрăшни куçкĕрет. Çав вăхăтрах хăш-пĕр сăмахсене тĕрĕс мар куçарнă (чтите – сума сăвăр, хисеплĕр!) е пачах сиктерсе хăварнă (великий – аслă!). «Много горестей и несчастий» тенине автор пĕр сăмахпа куçарать: «хуйхă», «призвание» тенине «чыс» сăмахпа куçарнă (тайăн, чун туртни). «Сближайтесь» - «çывăхланăр» сăмахпа куçарни тĕрĕсрех.

Çакна палăртмалла: куçару тума пысăк шайри творчество кирлĕ. Пĕр текстах кашни автор тĕрлĕрен куçарма пултарать. Чи кирли – текст содержанине май пур таран оригинала çывăх уçса пани. Капи тĕлĕшĕнчен йăнăшсемпе çитменлĕхсем сахал мар пулин те, тишкернĕ ĕç оригинал ăшлăхне пĕтĕмĕшле тĕрĕс уçса парать.

*Текстпа ĕçлени. Çыхăнуллă пуплев.* Виççĕмĕшсене 10 заданире «Пуçтах Тоня» текст тăрăх лартнă ыйтусене хуравлама хушнă. Пĕрремĕш ыйтăва уйлав туса куçарма тивет. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш ыйтусем – грамматика ыйтăвĕсем. 11 задани – текст содержанин изложенине çырни. Ку заданисене пĕтĕмĕшле илсен япăх мар пурнăçланă. Оригиналти предложенисенчи сăмахсен йĕркинчен уйрăлайманни куçа тăрăнать. Харкам ăс-хакăл витĕр шăранса тухнă сăмахсем сахалтарах. Хăшĕ-пĕрисем текст содержанине кĕскен палăртаççĕ е пĕр предложенипех çырлааççĕ. Сăмахран: «Ыттисене кӳентерекене, усал ĕç тăвакана пуçтах теççĕ». Пурте тенĕ пекех текстăн тĕп шухăшĕпе дидактика пĕлтерĕшне ăнланса илнине палăртмалла. Сăмахран: «Текстра эпир пуçтах Тоня çинчен вулатпăр. Вăл пурне те кӳрентерет. Юлашкинчен ăна çапăçакан хĕр ача теме пуçланă. Ку ĕнтĕ япăх ен. Ун пек нихăçан та пулмалла мар». Пĕр вĕренекен идея сĕмне пăснă: «Тоньăна ку килĕшмен, вăл ăна тĕксе янă. Арçын ача уншăн та макăрма пуçланă».

4-мĕш класра вĕренекенсем «Катаччи чупни» текстпа ĕçленĕ (10 задани: Текст тăрăх лартнă ыйтусене хуравлани; 11 задани: Текст содержанийĕн изложенине çырни). 1, 2 тата  4 ыйтусене пĕрер предложенипех хуравлама пулать. 3 ыйтăва уйлав туса хуравламалла: «Эсам çунана мĕн пирки туртайман?» («Çуна йытăшăн ытла та йывăр пулнă, çавăнпа та вăл ăна туртайман»). Нумайăшĕ ку ыйтăва кĕскен, пĕр предложенипе хуравланă: «Мĕншĕн тесен çуна йывăр пулнă». Хăшĕ-пĕрисем факт йăнăшĕсем тăваççĕ: «Ванюкпа Эскам çуна кӳлсе катаччи чупаççĕ»; «Пĕррехинче Ванюк юлташĕсене катаччи чуптарчĕ»; «Ванюк Эскампа япăх вылять». Пуплев тата логика çитменлĕхĕсем тĕл пулаççĕ: «Ванюк Эскампа катаччи вылять»; «Пĕррехинче Ванюк хăйĕн тусĕсене катаччи чуптарма шутлать. Çуна йывăр пулнă. Эскам юлашкинчен тарать».

Пиллĕкмĕшсем «Чĕкеç курăкĕ» текст тăрăх лартнă ыйтусене хуравланă. Ыйтăвĕсем уйлавлă: «мĕншĕн?», «мĕн пирки?». Шел пулин те, ачасем текст оригиналĕнчен хăпайманни кунта та куçа тăрăнать. Нумайăшĕ ыйтусене

тивĕçекен предложенисене ним улăштармасăр çырса илнĕ. 4 вĕренекен 10, 11, 12 заданисене пачах пурнăçламан. 11 ыйту: «Калавра ытлашши предложенисем хăшĕсем?». Темăпа содержани çыпăçуллă пулмаллине, çырура шухăш çыхăнулăхĕпе пĕрпĕтĕмлĕхне палăртмаллине 13 вĕренекен ĕçĕ çирĕплетмест. Ку класрах пуçламăшĕ тăрăх калава вĕçлемелле пулнă (12 задани). Нумайăшĕ текст оригиналне шыраса тупнă та ним улăштармасăр çырса илнĕ. Çырса илнĕ чухне йăнăшсем туса тултарнă: сас паллисене, сас палли тăрринчи паллăсене, орфограммăсемпе пунктограммăсене сиктерсе хăварни т. ыт.те. Çав вăхăтрах пурте тенĕ пекех хайлавăн сипет тĕшшине ваттисен сăмахĕпе палăртса хăварать: «Ахальтен каламан çав суяпа инçе каяймăн тесе» е «Пĕрре суятăн, тепре суятăн, виççĕмĕшĕнче ларса макăратăн».

Улттăмĕшсем тивĕçлĕ çĕре чарăну паллисем лартса текста юсанă (10 задани). Пур вĕренекен те ку задание аван пурнăçланă. 11 задани те улттăмĕшсемшĕн ансат пулнă («Пушă вырăнсене предложенисене çыăнтармалли сăмахсемпе тултар»).

Çиччĕмĕшсемшĕн 10 («Пăтраштарнă предложенисенчен çыхăнуллă текст йĕркеле») тата 11 («Паллă тунă сăмахсене урăххисемпе улăштарса теста илемлет») заданисем палăрмаллах ансат пулнă. Вĕсем пурте ку заданисене аван пурнăçланă.

10 задани («Сăмахсенчен предложенисем йĕркеле те вĕсене «Йăмра» çыхăнуллă текста пĕрлештер») саккăрмĕшсемшĕн те çăмăл пулни курăнчĕ.

Тăххăрмĕшсене 11 заданире «Филин» текст содержанине чăвашла çырса кăтартма ыйтнăччĕ. Вырăсла текстăн чăвашла изложенийĕ шухăшсене грамматикăпа логика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырса кăтартма пултарнине кăтартса парать. Шел пулин те, ку класра ачасен çыăнуллă пуплев ăслай-хăнăхăвĕсен шайĕ кĕтнинчен пĕчĕкрех пулни палăрчĕ. Акă еплерех пуплев йăнăшĕсемпе стиль шăйрăкĕсем тĕл пулаççĕ ачасен ĕçĕсенче: «Питĕ хăрушă саспа ӳхлет тата»; «Вăрманçă ӳхĕне кураймасăр персе пăрахма шутлать»; «Унта пĕр пӳрт кирпĕч йăваланать»; «Тепĕр кĕтесре ӳхĕ  çуначĕсемпе вĕçсе хăпарас пек хускалса тăрать»; «Кăмака мăрйи пӳрт виттипе маччана çĕмĕрсе урайне ӳкрĕ»;  «Вăрманçă тĕллерĕ те пăшалăн икĕ кĕпçипе пĕр харăс печĕ»; «Ӳхĕ куç хĕсмесĕр пăхать»; «Кăмака мăрйи пӳрт маччине ӳксе çĕмĕрнĕ»; «Тепĕр кĕтессинче ӳхĕ чĕррипех утса çӳренĕ»; «Арăмĕ кĕтесе пытанса ларнă, тепĕр кĕтесре ӳхĕ çӳлте»; «Ку пулăм хыççăн ӳхĕ вăрманçă патĕнче пурăнма тытăнать»; «Çĕрле икĕ кĕпçеллĕ пăшалтан персе кăмака труби маччана çĕмĕрсе урайне анса ӳкрĕ»; «Ӳхĕ тепĕр кĕтесре тăрать»; «Пăшалпа икĕ хут персе ячĕ»; «Ӳхĕ хăйĕн юррине пуçлать»; «Тек хăйне лартăр» т.ыт.те.

Вуннăмĕш-вунпĕрмĕшсемшĕн 11 задани питĕ ансат пулчĕ: «Сиктерсе хăварнисем вырăнне предложенисене çыхăнтаракан сăмахсем ларт».

.	*Харкам текста ăслани.* Виççĕмĕш класра вĕренекенсем «Манăн тус» калав çырчĕç. 25 ачаран 14-шĕ темăна туллинех уçнă. Уйрăмах анлă  сарăлнă

йӑнӑшсемпе ҫитменлӗхсен шутне ҫаксене кӗртмелле. Чӑваш пуплевне калӑпланӑ чухне авторсем вырӑсла шухӑшлаҫҫӗ: «Ӑна 9 ҫул»; «…куҫӗсем кӑвак, ҫӳҫӗсем сарӑ тӗслӗ»; «Питӗ хытӑ юрататӑп» т.ыт.те. «Вӑл виҫҫӗмӗш класра, ҫирӗммӗш шкулта вӗренет» (малтанах япалине, унтан унӑн пайне асӑнмалла); «Женя Шупашкарта виҫҫӗмӗш класра вӗренет» (япалапа унӑн пайӗсем хушшинчи ҫыхӑну йӗркине шута илмен. Шкул ятне сиктерсе хӑварнӑ). «Настя шанчӑклӑ тус», - тесе вӗҫлет хӑй калавне пӗр вӗренекен, анчах та калавӗнче ҫакна ҫирӗплетекен пӗр факт та ҫук. Тепӗр вӗренекен анлӑ текст вырӑнне резюме ҫырса панӑ: «Манӑн тус пур. Вӑл Яна ятлӑ. Яна тирпейлӗ, ӗҫчен, ырӑ, хаваслӑ хӗр ача. Вӑл мутанчӑк мар».

Содержани ҫыхӑнулӑхӗпе пӗрпӗтӗмлӗхӗ тата ҫыру тирпейлӗхӗпе тӗрӗслӗхӗ тӗлӗшӗнчен ҫак авторсен ӗҫӗсем ыттисемпе танлаштарсан пахарах: Сыбатова Валерия, Леонтьева Ольга, Ефимов Егор, Романова Тамара (Шупашкарти 49-мӗш вӑтам шкул); Капитонова Татьяна, Яковлев Олег(Шупашкарти 20-мӗш вӑтам шкул); Семенова Камилла (Шупашкарти 29-мӗш вӑтам шкул); Андреев Дмитрий (Пушкӑртстанри Пишпӳлекри 1-мӗш вӑтам шкул); Иливанова Ксения (Шупашкарти 27-мӗш вӑтам шкул).

4 класра вӗренекенсем «Эпӗ кушакпа (йытӑпа) ҫапла вылятӑп» (12 задани) калав ҫырчӗҫ. 32 вӗренекентен 13-шӗ темӑна туллинрех те тӗплӗнрех уҫса панӑ. Куҫа тӑрӑнакан йӑнӑшсем тӗпрен илсен ачасем черновиксӑрах ӗҫленипе ҫыхӑннӑ. Ҫакна пула шухӑш ҫыпӑҫулӑхӗпе пӗрпӗтӗмлӗхӗ нумай чухне такӑнать. «Упреждающий синтез» механизмне аталантарас тӗлӗшпе ятарласа ӗҫлеме кирли куҫкӗрет. Тӳрӗ пуплеве ҫырура палӑртнӑ чухне кавычкӑсене типографи шифчӗсемпе усӑ курни тӗлӗнтерчӗ. Ҫавӑн пекех хӑш-пӗр ҫӗрте йӑнӑш ҫырнӑ вырӑнсене скобкӑна хупасси йӑлана кӗнӗ.

Акӑ мӗнле содержани йӑнӑшӗсем тӗл пулаҫҫӗ ачасен ӗҫӗсенче: «Унӑн ҫӑмӗ ҫӑмламас тата ҫемҫе» (кирлӗ: тирӗ); «Кантӑкран эпӗ килессе кӗтет» (кантӑкран пӑхаҫҫӗ!); «Пирӗн Муся ытларах ҫывӑрма юратать. Ҫавӑнпа шкултан килсен эпӗ кушак ҫурисемпе вылятӑп» (ӑнлансах пӗтермелле мар: кушак ҫывӑрма юратнӑшӑн автор унӑн ҫурисемпе вылять-и?); «Кушак мунча кӗме юратать» (ку автор темскер пӑтраштарать пулмалла). Пӗр автор калав вырӑнне 7 пунктран тӑракан отчет ҫырса панӑ.

Паха текст требованийӗсене (шухӑшлав харпӑрлӑхӗ, текст ячӗпе содержани ҫыхӑнулӑхӗ, план тӑрӑх ҫырни, абзацсем пурри, шухӑшсен ҫыхӑнулӑхӗ т. ыт. те) ҫак авторсен ӗҫӗсем пӑхӑнарах параҫҫӗ: Егорова Руслана (Вӑрнарти 1-мӗш вӑтам шкул); Петров Илья (Пушкӑртстанри Пишпӳлекри 1-мӗш вӑтам шкул); Фролова Софья (Хӗрлӗ Чутайри Хусанкасси пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан шкул); Петрова Софья (Шупашкарти 49-мӗш вӑтам шкул); Васильев Кирилл (Шупашкарти 1-мӗш гимнази); Васильева Ксения (Шупашкарти 2-мӗш пуҫламӑш шкул).

Пиллӗкмӗш класра вӗренекенсен 86 ӗҫӗнчен пуҫланӑ калава вӗҫлеме никам пулӑшмасӑрах тӑрӑшни ӑнӑҫуллӑ пулнӑ тесе ҫаксене асӑнмалла:

Александрова Ксения, Сынков Максим (Шупашкарти 44-мĕш лицей); Михайлова Елизавета (Пушкăртстанри Пишпӳлекри 1-мĕш вăтам шкул); Головукина Мария (Шупашкарти 46-мĕш гимнази); Любимова Анна (Çĕнĕ Шупашкарти 18-мĕш вăтам шкул); Кудряшова Александра (Шăмăршăри вăтам шкул); Кудрявцев Андрей (Шупашкарти 53-мĕш вăтам шкул).

6-мĕш класра вĕренекенсем килĕшекен чĕрчун çинчен калав çырнă та ăна ят панă. Характерлă йăнăшсемпе шăйрăксенчен каллиграфипе графика правилисене шута илсех пĕтерменнине асăнмалла. Абзацсене уйăрмаççĕ. Ачасем кушак, йытă, пакша, чĕрĕп, çӳлевĕç, попугай çинчен çыраççĕ. Хăшĕ-пĕрисем ют текстсене çырса илнĕ. Кунта та сас паллисене, чарăну паллисене сиктерсе хăваракансем пур. Анлă сарăлнă çитменлĕхсем тесе юнашар предложенисенчех пĕрешкел сăмахсемпе усă курнине каламалла. Синонимсемпе усă курманни, курмасăр иртнĕ вăхăт форминчи глаголсене вырăнсăр кĕртсе лартни çине-çинех тĕл пулать. Вĕсен сăлтавĕ – черновиксăрах çырни. Акă хăш-пĕр йăнăшсем: «Куçĕсем пысăк, çăмламас хӳреллĕ» (предложение шухăшласа çитермесĕрех çырса хунă); «Пирĕн пурăнакан çуртра кушак пур» (кирлĕ: Эпир пурăнакан çуртра…); «Эпĕ питĕ Темăна юрататăп» (кирлĕ: Эпĕ Темăна питĕ юрататăп); «Кушак çури хурапа шурă тĕслĕ» (кирлĕ: Кушак çури хура шурă тĕслĕ); «Тепĕр такран» (кирлĕ: тепĕртакран) т.ыт.те. Ыттисенчен пахарах тесе çак авторсен калавĕсене асăнмалла: Игнатьева Анжелика, Чернов Павел (Пушкăртстанри Пишпӳлекри 1-мĕш вăтам шкул).

7-мĕш класра вĕренекенсем вĕçĕ тăрăх калав пуçламăшĕпе тĕп пайне хайларĕç (12 задани): «Çапла иртсе кайрĕ канмалли кун». Типлă йăнăшсемпе çитменлĕхсем çаксем. Нумайăшĕ плансăрах çыраççĕ. Çавна пула тепĕр хут каланисем, çине-çинех пĕр сăмахпа усă курни тĕл пулать. Вырăсла шухăшласа чăвашла çырса хунине нимпе те пытараймăн: «Йĕлтĕрсем сыртăмăр» («Йĕлтĕр сыртăмăр» темелле); «А эпир аннепе тĕрлĕ фигуристски пируэтсем тăватпăр»(?); «Уроксене çăмăллăн шутларăм» («Задачăсене…» темелле); «Ăшă чей ĕçрĕмĕр» («Вĕри чей…» темелле); «Ирех эпир асаттепе асанне пулăшма тытăнтăм» («упреждающий синтез» механизмĕ ĕçлемен); «Кăнтăрла иртни вунтăватă сехетре» («Кăнтăрла иртни икĕ сехетре» темелле) т.ыт.те.

44 вĕренекенрен 17-шĕ темăна ыттисенчен тарăнрах та туллинрех уçса панă. Харкамлăхпа шухăшлав чĕрĕлĕхĕ ыттисенчен çӳллĕрех шайра пулнипе çак авторсен хайлавĕсем уйрăларах тăраççĕ: Тиманова Светлана (Тутарстанри Емелькино вăтам шкулĕ); Морозова Софья, Макарова Софья (Шупашкарти 53-мĕш вăтам шкул); Какшанова Настя (Шупашкарти 53-мĕш вăтам шкул).

Умĕнхи класри пекех, саккăрмĕшĕсемшĕн те çак задани палăрмаллах çăмăл пулчĕ: «Вĕçĕ тăрăх калав пуçламăшĕпе варрине ăсла. Калава ят пар». Калав вĕçĕ тĕп пайĕнчи шухăшсене пĕр тĕвве çыхать («пиллĕк» паллă илнин историне çырса кăтартмалла). Акă мĕнлерех çӳп-çап куçа тăрăнать ачасен ĕçĕсенче: «Иртнĕ урокра эпир çĕнĕ тема иртрĕмĕр» (вырăсла шухăшласа

çырнă); «Тĕрĕс хуравласа, учительница мана «пиллĕк» паллă лартса пачĕ»; «Асаплансан-асаплансан çапах та икĕ-виçĕ йĕр [рет!] çыхрăм» (сăмах нуски çыхни çинчен). Акă тепĕр ĕç: «Ӳкерчĕк доска çинче çакăнса тăрать. Эпĕ доска патĕнче [умĕнче!]. Вĕсем [камсем?] предложенисем калаççĕ». (Автор мĕн çинчен, мĕн çырнине, малалла мĕн çырмаллине чухламасть. Шухăшсене малтан черновик çинче сарса хуманни куçкĕрет. 7±асамлă формула ĕçлемест). Грамматикăпа орфографи йăнăшĕсенчен çаксем тăтăшах тĕл пулаççĕ: хупă сасăсем вăрăмланнине тĕрĕс палăртманни (паллаштарчĕ, «пиллĕк» паллă т. ыт.те), çемçе сыпăксенче кирлĕ мар çĕртенех çемçетӳ палли лартни (тĕлĕнеть, вĕренеть, йĕреть т.ыт.те) . Саккăрмĕшсенчен 4-шĕ темăна туллинрех те тарăнрах уçса панă. Харкамлăх тата пурнăçа чĕрĕрех курассин шайĕ ыттисенчен пысăрах пулнипе Назарова Екатерина (Йĕпреç районĕнчи Хурамал вăтам шкулĕ) ĕçĕ уйрăлса тăрать.

9-мĕш класра пĕр-пĕр чĕрчун çинчен калав çырса ăна ят памалла пулнă. 18 ĕçрен 5-шĕнче темăна туллинрех уçса панă. Харкамлăх шайĕ ыттисенчен çӳллĕрех пулнипе çак авторсем çырнă калавсем уйрăлса тăраççĕ: Григорьева Мария (Çĕнĕ Шупашкарти 8-мĕш вăтам шкул); Филиппова Снежана (Шупашкарти 53-мĕш вăтам шкул). Вĕçне çитичченех шухăшласа çитермесĕр çырса хунă предложенисем: «Вăл питĕ ăслă кушак пулса»; «Апат çисен тасалма тытăнать, пĕр сехете яхăн илем кĕрет»; «Хăйĕн хуçине нихçан та пăшăрхантармаç»; «Вăл апрель вĕçнелле вĕçсе килет те пире уйăх ытла хăйсен юррипе савăнтараççĕ»; «Мулкачăн питĕ лайăх илтни»; «Хĕлле вăл шурă, çемçе, ăшă тата çăра пулать» т. ыт.те.

10 – 11-мĕш классенче вĕренекенсем ватă тăванĕсем çинчен калав ăсларĕç. Акă куçа тăрăнакан йăнăшсемпе çитменлĕсем: «Эпир асаттепе асаннепе пĕр ялта пурăнатпăр»; «… пирĕн патне килет»; «Ултă мăнук астума пулăшаççĕ»; «Вăл тата чи тутлă куклисем пĕçерет»; «Вăл еплерех тараватлă, çут çанталăка юрататчĕ, çырла вырăнĕсене пĕлетчĕ»; «Эпир ял пуçламăшĕнче, вăл ял вĕçĕнче пурăнатпăр»; «Вĕсем Челнара пурăнаççĕ»; «Кукамай патне килсен вăл пире хăмла çырлипе [пĕçернĕ!] кукăльсемпе хăналаса ярать»; «Эпир ăна питĕ вăйлă юрататпăр»; «Выçлăха, сивĕлĕхе чăтса хĕллене каçнă» т. ыт. те.

Ку классенче хайланă калавсенчен Герасимова Екатерина (Йĕпреç районĕнчи Хурамал вăтам шкулĕ) хайлавĕ ыттисенчен палăрмаллах уйрăлса тăрать.

*Пĕтĕмлетӳсемпе сĕнӳсем.* Олимпиада ĕçĕсен тишкерĕвĕ шкул ачисем программа материалне пĕтĕмĕшле илсен аван ăса хывнине кăтартса пачĕ. Çырура тĕл пулакан йăнăшсемпе çитменлĕхсен сăлтавĕсем заданисене пурнăçланă чухне тимлĕхе вĕçне çити тытса пырайманнипе çыхăннă. Сас палли тăррисенчи паллăсене сиктерни çулсеренех тĕл пулать. Творчество заданийĕсене пурнăçланă чухне ачасем малтан мĕн çырнине, малалла мĕн çырмаллине шута илмеççĕ. Çавна пула шухăшсем таткаланчăк, çыхăнусăр пулса тухаççĕ. Творчество çыру ĕçĕсене черновиксăрах çырма хăнăхни çӳлерех асăннă çитменлĕхе пĕтерме мар, малалла аталантарма пулăшать.

Çакна тепĕр хут палăртса хăварни вырăнлă пулма кирлĕ. Çырупа шухăшлав пĕр-пĕринпе тачă  çыхăнура. Вĕсем пĕр-пĕрне витĕм кӳрсе аталанаççĕ, пĕр-пĕриншĕн сăлтавпа тĕллев пулса тăраççĕ. Çырура шухăш кӳлепине сарса хурса ăна курăмлă тума, шухăш çипписене кирлĕ пек çыхăнтарса пыма пулать. Çакă вăл текст требованийĕсене туллин шута илме хушать.